27-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 20 пус.

1944
АВГУСТ
1
ЫТЛАРИКУН
150(6645) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗӖ

Совет Союзӗн Маршалне РОКОССОВСКИЕ

БЕЛОРУССИРИ 1-мӗш фронт ҫарӗсем, вайлӑ ҫапӑҫусем хыҫҫан СЕДЛЕЦ, МИНСК МАЗОВЕЦКИЙ, ЛУКОВ хулисене — ҫулӗсен пысӑк узелӗсене — нимӗҫсен ВАРШАВА хули патӗнчи пысӑк вырӑнсенчи оборонӑн хӑватлӑ тӗрекӗсене — штурмласа туртса илнӗ.

СЕДЛЕЦ, МИНСК МАЗОВЕЦКИЙ тата ЛУКОВ хулисене туртса илессишӗн пынӑ ҫапӑҫусенче РАДЗИЕВСКИЙ генерал-майорӑн, танковӑй ҫарсен генерал-майорӗн ЮЩУКАН, танковӑй ҫарсен генерал-лейтенанчӗн ПОПОВАН, танковӑй ҫарсен генерал-майорӗн ВЕДЕНЕЕВАН, танковӑй ҫарсен генерал-майорӗн ДЫБОВАН, КОНСТАНТИНОВ полковникӑн, ПАВЛУШКО полковникӑн, ЖАРОВ полковникӑн, ШЕВЧЕНКО полковникӑн, СТЕПАНОВ полковникӑн, ТУРЕННОВ полковникӑн, ПИСКАРЕВ полковникӑн, ПИЗНЕВ подполковникӑн, МАКАРОВ подполковникӑн танкисчӗсем; КРЮКОВ генерал-лейтенантӑн, ЯГОДИН генерал-майорӑн, МИЛЛЕРОВ генерал-майорӑн, КУРСАКОВ генерал-майорӑн кавалерисчӗсем; ГУСЕВ генерал-лейтенантӑн, АНАШКИН генерал-майорӑн, ЧЕРНОВ генерал-майорӑн, КАЛАДЗЕ полковникӑн ҫарӗсем; артиллери генерал-майорӗн ЛЯРСКИН, КОПЕЛЕВ полковникӑн, НИКИТИН полковникӑн, МАЛЯВСКИЙ полковникӑн, МУХАЧЕВ подполковникӑн, ЩЕРБЕНКО подполковникӑн, ШАДРУХИН подполковникӑн, СУШМАРЧЕНКО майорӑн артиллерисчӗсем; авиаци генерал-лейтенанчӗн ПОЛЫНИНАН, авиаци генерал-майорӗн КРУПСКИН, авиаци генерал-майорӗн ТОКАРЕВАН, авиаци генерал-майорӗн СИДНЕВАН, ГАВРИЛЬЧЕНКО подполковникӑн, УХАНЕВ майорӑн летчикӗсем; КОМАРОВ полковникӑн, ЛЕВИН полковникӑн, ДОГАЕВ капитанӑн саперӗсем; ИГНАТЬЕВ подполковникӑн, БЕЛЕНКО полковникӑн, ЛЕСНИКОВ майорӑн, ЦИБУЛЬКО майорӑн связисчӗсем чапа тухнӑ.

Тунӑ ҫӗнтерӗве яланлӑха палӑртса хӑварас тесе, СЕДЛЕЦ, МИНСК МАЗОВЕЦКИЙ тата ЛУКОВ хулисене туртса илессишӗн пынӑ ҫапӑҫусенче уйрӑмах чапа тухнӑ соединенисемпе чаҫсене «СЕДЛЕЦКИ» тесе ят пама тата орденсемпе наградӑлама тӑратас.

Паян, июлӗн 31-мӗшӗнче, 22 сехетре хамӑр Тӑван ҫӗршыв столици МУСКАВ, инҫӗр ҫирӗм тӑватӑ тупӑпа ҫирӗм хут пӗр харӑс персе, БЕЛОРУССИРИ 1-мӗш фронтӑн паттӑр ҫарӗсене, СЕДЛЕЦ, МИНСК МАЗОВЕЦКИЙ тата ЛУКОВ хулисене туртса илнӗскерсене Тӑван ҫӗршыв ячӗпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан ҫарсене, СЕДЛЕЦ, МИНСК МАЗОВЕЦКИЙ тата ЛУКОВ хулисене туртса илессишӗн пынӑ ҫапӑҫусенче пулнӑскерсене, питӗ чаплӑ ҫапӑҫнӑшӑн ТАВ ТАВАТАП.

Хамӑр Тӑван ҫӗршывӑн ирӗклӗхӗпе никама пӑхӑнманлӑхӗшӗн ҫапӑҫса вилнӗ геройсене ӗмӗр-ӗмӗр мухтав!

Нимӗҫ захватчикӗсене — вилӗм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзӗн Маршалӗ И. СТАЛИН.

1944 ҫулхи июлӗн 31-мӗшӗ.

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗӖ

Арми генералне БАГРАМЯНА

БАЛТИКА ТАГАХӖНЧИ 1-мӗш фронт ҫарӗсем, танковӑй соединенисемпе пехота ҫав тери хӑвӑрт маневр тунине пула, тӑшманпа ҫапӑҫса, паян, июлӗн 31-мӗшӗнче, ИЕЛГАВА (МИТАВА) хулине — Балтика тӑрӑхне Хӗвелтухӑҫ Пруссипе ҫыхса тӑракан ҫулӗсен тӗп узелне — туртса илнӗ.

ИЕЛГАВА хулине туртса илессишӗн пынӑ ҫапӑҫусенче танковӑй ҫарсен генерал-лейтенанчӗн ОБУХОВАН, танковӑй ҫарсен генерал-майорӗн БЕЛЫЙАН, КРЕМЕР полковникӑн, СТАРОДУБЦЕВ подполковникӑн, танковӑй ҫарсен генерал-майорӗн РОДИОНОВАН, танковӑй ҫарсен генерал-майорӗн АСЛАНОВАН, танковӑй ҫарсен генерал-майорӗн СКОРНЯКОВАН, МАКСИМОВ полковникӑн, НИКОЛАЕВ подполковникӑн, ЯБЛОКОВ подполковникӑн, ШУКОКИДЗЕ подполковникӑн, КОЩЕЛЕВ подполковникӑн, КОМКО подполковникӑн танкисчӗсем; КРЕЙЗЕР генерал-лейтенантӑн, МИССАН генерал-лейтенантӑн, НЕВЕРОВ генерал-майорӑн, ПОТАПЕНКО генерал-майорӑн, ЮХИМЧУК генерал-майорӑн, РОДИОНОВ генерал-майорӑн, СОБЯНИН полковникӑн, ЛЕНИВЫЙ подполковникӑн, БУТИН подполковникӑн, ПРОСКУРНЯ подполковникӑн, ПАРАМОНОВ майорӑн ҫарӗсем; артиллери генерал-полковникӗн ХЛЕБНИКОВАН, артиллери генерал-майорӗн ТЕЛЕГИНАН, артиллери генерал-майорӗн БАЖАНОВАН, артиллери генерал-майорӗн ИОНОВАН, ЗДЕЛЬСОН полковникӑн, ВИЛИКИЙ полковникӑн, КОЗЛОВ полковникӑн, БЕСКОМСКИЙ подполковникӑн, ГНАТУШИН полковникӑн, ВИСКОВ подполковникӑн, БАРЫШЕВ полковникӑн, ЕФИМОВ майорӑн артиллерисчӗсем; авиаци генерал-лейтенанчӗн ПАПИВИНАН, авиаци генерал-майорӗн САНДАЛОВАН, СКОК полковникӑн, ФОКИН полковникӑн, КИТАЕВ полковникӑн, СТАЛИН полковникӑн, АЛЕКСАНДРОВ полковникӑн, КУЧМА полковникӑн, КУРБАТОВ полковникӑн, МАРТЬЯНОВ майорӑн, ИЛЬИН майорӑн, ЛУТОХИН майорӑн летчикӗсем; инженери ҫарӗсен генерал-майорӗн КОСАРЕВАН, инженери ҫарӗсен генерал-майорӗн БАЖЕНОВАН, ИВАНОВ подполковникӑн, КУЗНЕЦОВ полковникӑн саперӗсем; ҫыхӑну ҫарӗсен генерал-майорӗн БАБКИНАН, ЧЕРНОВ полковникӑн, ОБАНИЧЕВ подполковникӑн, БОРЗОБОГАТ полковникӑн, СТАРИЧКОВ подполковникӑн связисчӗсем чапа тухнӑ.

Тунӑ ҫӗнтерӗве яланлӑха палӑртса хӑварас тесе, ИЕЛГАВА (МИТАВА) хулине туртса илессишӗн пынӑ ҫапӑҫусенче уйрӑмах чапа тухнӑ соединенисемпе чаҫсене «МИТАВСКИ» тесе ят пама тата орденсемпе наградӑлама тӑратас.

Паян, июлӗн 31-мӗшӗнче, 23 сехетре хамӑр Тӑван ҫӗршыв столици МУСКАВ, инҫӗр ҫирӗм тӑватӑ тупӑпа ҫирӗм хут пӗр харӑс персе, БАЛТИКА тӑрӑхӗнчи 1-мӗш фронтӑн паттӑр ҫарӗсене, ИЕЛГАВА хулине туртса илнӗскерсене Тӑван ҫӗршыв ячӗпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан ҫарсене, ИЕЛГАВА хулине ирӗке кӑларассишӗн пынӑ ҫапӑҫусенче пулнӑскерсене, питӗ чаплӑ ҫапӑҫнӑшӑн ТАВ ТАВАТАП.

Хамӑр Тӑван ҫӗршывӑн ирӗклӗхӗпе никама пӑхӑнманлӑхӗшӗн ҫапӑҫса вилнӗ геройсене ӗмӗр-ӗмӗр мухтав!

Нимӗҫ захватчикӗсене — вилӗм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзӗн Маршалӗ И. СТАЛИН.

1944 ҫулхи июлӗн 31-мӗшӗ.

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗӖ

Арми генералне ЧЕРНЯХОВСКИЕ

БЕЛОРУССИРИ 3-мӗш фронт ҫарӗсем, наступлени пуҫласа ярса, НЕМАН шывӗ урлӑ каҫса кайнӑ, тӑшманӑн НЕМАН шывӗн хӗвеланӑҫ хӗрринчи вайлӑ ҫирӗплетнӗ оборонине татнӑ, вара виҫӗ кун хушши пынӑ наступленилле ҫапӑҫусенче 50 километр таран шалалла кӗрсе кайнӑ, татса кӗнӗ вырӑна фронт сарлакӑшӗпе 230 километр таран сарнӑ.

Ҫав наступленире фронт ҫарӗсем МАРИАМПОЛЬ хулипе пысӑк чугун ҫул станцине, ҫулйӗрсен ПИЛЬВИШКИ, ШОСТАКОВ, СЕЙНЫ ятлӑ паха узелӗсене туртса илнӗ тата халӑх пурӑнакан ытти 1.500 пункта ытла йышӑннӑ.

НЕМАН шывӗ урлӑ каҫнӑ чухнехи тата нимӗҫсен оборонине татнӑ чухнехи ҫапӑҫусенче ГАЛИЦКИЙ генерал-полковникӑн, ГЛАГОЛЕВ генерал-полковникӑн, МОРОЗОВ генерал-лейтенантӑн, КРЫЛОВ генерал-полковникӑн, ГУРЬЕВ генерал-майорӑн, ШАФРАНОВ генерал-майорӑн, ЗАВАДОВСКИЙ генерал-лейтенантӑн, КОШЕВОЙ генерал-лейтенантӑн, ОЛЕШЕВ генерал-майорӑн, ПРОВАЛОВ генерал-майорӑн, ПОПЛАВСКИЙ генерал-майорӑн, ТОЛСТИКОВ полковникӑн, БУРМАКОВ генерал-майорӑн, ЦЫГАНОВ генерал-майорӑн, ЧЕРНОВ генерал-майорӑн, ВОЛКОВ полковникӑн, ПЕТЕРС генерал-майорӑн, КОВТУНОВ полковникӑн, БЕРЕСТОВ генерал-майорӑн, КАТЮШИН полковникӑн, ЕНШИН генерал-майорӑн, ЮРИН полковникӑн, КАЛИНИН генерал-майорӑн ҫарӗсем; артиллери генерал-полковникӗн БАРСУКОВАН, артиллери генерал-майорӗн ФЕДОРОВАН, артиллери генерал-майорӗн СТАРОСТИНАН, артиллери генерал-лейтенанчӗн СЕМЕНОВАН, артиллери генерал-майорӗн СЕМИНАН, артиллери генерал-майорӗн САЗОНОВАН, артиллери генерал-лейтенанчӗн БОДРОВАН, СОКОЛОВ полковникӑн, СЕДОВ полковникӑн, ТОВБИС полковникӑн, ГЛУШКОВ полковникӑн, КОБЗЕВ полковникӑн, РУСЕЦКИЙ полковникӑн, ФЕДОТОВ полковникӑн, БАРСКИЙ полковникӑн, ШУЛЬГА полковникӑн, КУЛИКОВ полковникӑн артиллерисчӗсем; танковӑй ҫарсен генерал-полковникӑн РОДИНАН, танковӑй ҫарсен генерал-майорӗн БУРДЕЙНЫЙАН, танковӑй ҫарсен генерал-майорӗн НЕЦВЕТАЙЛАН, БУРЛЫГА полковникӑн танкисчӗсем; авиаци генерал-полковникӗн ХРЮКИНАН, авиаци генерал-лейтенанчӗн БЛАГОВЕЩЕНСКИН, авиаци генерал-майорӗн ЗАХАРОВАН, ПРУТКОВ полковникӑн, ВАСИЛЬЕВ полковникӑн, ПУЯД полковникӑн летчикӗсем; инженери ҫарӗсен генерал-лейтенанчӗн БАРАНОВАН, инженери ҫарӗсен генерал-майорӗн БОРДЗИЛОВСКИН, инженери ҫарӗсен генерал-майорӗн ЗВЕРЕВАН, инженери ҫарӗсен генерал-майорӗн МАРЬИНАН, НЕМИРОВСКИЙ полковникӑн, ШИЛО полковникӑн, СЕМЕНОВ майорӑн, ЛЕЙМАН полковникӑн, ПОПЛАВСКИЙ подполковникӑн, СОЛДАТЕНКОВ полковникӑн, ЛУКАШЕНКО полковникӑн саперӗсем; ҫыхӑну ҫарӗсен генерал-майорӗн БУРОВАН, ПРИХОДАЙ полковникӑн, ШТЕЙМАН подполковникӑн, ДАВИДЕНКО полковникӑн, БЕЛЫШЕВ полковникӑн связисчӗсем чапа тухнӑ.

Тунӑ ҫӗнтерӗве яланлӑха палӑртса хӑварас тесе, НЕМАН шывӗ урлӑ каҫнӑ чухнехи тата нимӗҫсен оборонине татнӑ чухнехи ҫапӑҫусенче уйрӑмах чапа тухнӑ соединенисемпе чаҫсене «НЕМАНСКИ» тесе ят пама тата орденсемпе наградӑлама тӑратас.

Паян, июлӗн 31-мӗшӗнче, 24 сехетре хамӑр Тӑван ҫӗршыв столици МУСКАВ, БЕЛОРУССИРИ 3-мӗш фронтӑн паттӑр ҫарӗсене, НЕМАН шывӗ урлӑ каҫса тӑшман оборонине татнӑскерсене, инҫӗр ҫирӗм тӑватӑ тупӑпа ҫирӗм хут пӗр харӑс персе, Тӑван ҫӗршыв ячӗпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан ҫарсене, НЕМАН шывӗ урлӑ каҫнӑ чухнехи тата нимӗҫсен оборонине татнӑ чухнехи ҫапӑҫусенче пулнӑскерсене, питӗ чаплӑ ҫапӑҫнӑшӑн ТАВ ТАВАТАП.

Хамӑр Тӑван ҫӗршывӑн ирӗклӗхӗпе никама пӑхӑнманлӑхӗшӗн ҫапӑҫса вилнӗ геройсене ӗмӗр-ӗмӗр мухтав!

Нимӗҫ захватчикӗсене — вилӗм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзӗн Маршалӗ И. СТАЛИН.

1944 ҫулхи июлӗн 31-мӗшӗ.

Совет Информаци Бюровӗнчен

ИЮЛӖН 29-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

Июлӗн 29-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем РЕЗЕКНЕ (Режица) хулинчен ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре тата хӗвеланӑҫнерехре, тӑшманпа ҫапӑҫса, малалла тапӑнса пынӑ, халӑх пурӑнакан 400 пункта ытла йышӑннӑ. Вӑл шутра — ЖАГАТАС, МАКУЖИ, МОЛНИЭКИ, РУДЗЕТИ, РУСИНИ ятлӑ пысӑк ялсем тата ВАРАКЛАНИ, ГАЛЬБАРИ ятлӑ чугун ҫул станцийӗсем.

ДАУГАВПИЛС (Двинск) хулинчен хӗвеланӑҫнерехре пирӗн ҫарсем, тӑшманпа ҫапӑҫса, Латви ССР-ӗн уезд центрне ИЛУКСТЭ хулине, Литва ССР-ӗн уезд центрне ЗАРАСАЙ хулине туртса илнӗ, ҫавӑн пекех тата халӑх пурӑнакан ытти 70 пункта ытла йышӑннӑ. Вӑл шутра — СКРУДЕЛИНА ПАГРЕНДЗИНЫ, СМЕЛИНЕ, ПЕТРУНИШКИ, ШАВЛИ, ДЕГУЧАЙ ятлӑ пысӑк пунктсем.

ШАУЛЯЙ (Шавли) хулинчен ҫурҫӗр-хӗвелтухӑҫнерехре тата ҫурҫӗртерехре пирӗн ҫарсем, тӑшманпа ҫапӑҫса, малалла куҫса пынӑ, халӑх пурӑнакан 200 пункта ытла туртса илнӗ. Вӑл шутра — ПОПУВЕСЯЙ, ВАШКАЙ, ПАШВИТИНИС, ЕЛЕЯ, ЖАГАРЕ ятлӑ пысӑк пунктсем.

УКМЕРГЕ хулинчен хӗвеланӑҫнерехре тата кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехре пирӗн ҫарсем, тӑшманпа ҫапӑҫса, малалла тапӑнса пынӑ, ИОНАВА хулине туртса илнӗ, ҫавӑн пекех тата, тӑшманпа ҫапӑҫса, халӑх пурӑнакан ытти 100 пункта ытла йышӑннӑ. Вӑл шутра — ШАТЫ, БУКАНЦЕ, ЖЕЙМЫ, ДАРГУЖИ, УЖУСАЛИ, КОРМЯЛОВ (Каунас хулинчен 9 километр ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре) ятлӑ ялсем тата ЛЕЙБИШКИ, ПОГЕЛОЖЕ, ИЛГОБРОДЫ, ИОНАВА, КОЛНЯНЦЫ, ГУЛЬБИНИШКИ, ЖЕЙМАЙ ятлӑ чугун ҫул станцийӗсем.

ГРОДНО хулинчен хӗвеланӑҫнерехре тата кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехре пирӗн ҫарсем, тӑшманпа ҫапӑҫса, халӑх пурӑнакан 80 пункта ытла туртса илнӗ. Вӑл шутра — СТАРОКАМЕНКА, ДОМБРОВА, РЕЖКОВЦЕ, НОВА-ВОЛЯ, МАЛОВИСТА, ПОКОСЬНА, ЧЕРВОНКА, ЯНУВ, ТЕОЛИН, ЧЕРНА-ВЕСЬ ятлӑ пысӑк пунктсем тата КАМЕНКА НОВА, ЧАРНА-ВЕСЬ ятлӑ чугун ҫул станцийӗсем.

БРЕСТ хулинчен хӗвеланӑҫнерехре пирӗн ҫарсем тӑшманӑн ҫавӑрса илнӗ группировкипе ӑнӑҫлӑн ҫапӑҫнӑ, ҫавӑрса илнӗ унка хӗссе пырса, халӑх пурӑнакан КЛЕЙНИКИ, НЕПЛЕ, САМОВИЧЕ, ЛОБАЧУВ, КРУЖАВКА, КОРОШИН, ЛЕНГИ ятлӑ пунктсене туртса илнӗ. Тӑшман, хӑйӗн пӗтӗм вӑйне хурса, ҫавӑрса илнӗ унка татма хӑтланнӑ, анчах та ӑна каялла сирсе ывӑтнӑ, ҫынсемпе техника тӗлӗшӗнчен пысӑк ҫухатусем кӳнӗ.

ДЕМБЛИН хулинчен кӑнтӑртарахра пирӗн ҫарсем ВИСЛА шывӗн хӗвелтухӑҫ хӗррине САН вӑрри таран тӑшманран пӗтӗмӗшпех тасатнӑ, халӑх пурӑнакан 150 пункта ытла туртса илнӗ.

ПЕРЕМЫШЛЬ хулинчен ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре тата хӗвеланӑҫнерехре пирӗн ҫарсем, тӑшманпа ҫапӑҫса, ҫаплах малалла тапӑнса пынӑ, халӑх пурӑнакан 200 пункта ытла туртса илнӗ. Вӑл шутра — халӑх пурӑнакан ГРЕМБУВ, ВЫГЖА, ВОЯНУВ, ВОЛЯ РАНИЖОВСКА, ЛИПНИЦА, МАЗУРЫ, ВЫСОКА, СТОБЕРНА, ГУСУВ, ДЫНУВ ятлӑ пысӑк пунктсем тата РОГУЗЬНО, ЗАГУЖЕ, ЯВОРНИК-ПОЛЬСКИ, ДЫНУВ чугун ҫул станцийӗсем.

ЛЬВОВ хулинчен кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехре тата кӑнтӑртарахра пирӗн ҫарсем ҫаплах наступлени туса пынӑ, Львов облаҫӗнчи район центрне ШИРЕЦ хулипе чугун ҫул станцине, район центрӗсене — НИКОЛАЕВ ялне, ХОДОРОВ ялне туртса илнӗ, ҫавӑн пекех тата, тӑшманпа ҫапӑҫса, халӑх пурӑнакан ытти 100 пункта ытла йышӑннӑ. Вӑл шутра — ХИШЕВИЦЫ, ЧУЛОВИЧИ, ДОБЖАНЫ, РОЗДОЛ, ЖИДЭЧУВ ятлӑ пысӑк ялсем тата ШИРЕЦ, ЧЕРКАСЫ, ЖИДЭЧУВ чугун ҫул станцийӗсем.

СТАНИСЛАВ хулинчен хӗвеланӑҫнерехре пирӗн ҫарсем Станислав облаҫӗнчи район центрне РОЖНЯТОВ хулипе чугун ҫул станцине туртса илнӗ, ҫавӑн пекех тата, тӑшманпа ҫапӑҫса, халӑх пурӑнакан ытти 20 пункта ытла йышӑннӑ. Вӑл шутра — ТУЖИЛУВ, СВАРЫЧУВ, СТРУТЫНЬ, ЦЕНЯВА, ЯСЕНОВЕЦ ятлӑ пысӑк ялсем.

Фронтӑн ытти участокӗсенче паллӑ улшӑнусемех пулман.

Июлӗн 28-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем мӗнпур фронтсенче нимӗҫсен 92 танкне ҫӗмӗрсе тӑкнӑ. Сывлӑшри ҫапӑҫусенче тата зенитнӑй артиллери тӑшманӑн 60 самолетне персе ӳкернӗ.

☆ ☆ ☆

ПИРӖН АВИАЦИ ВАРШАВА, РИГА, ИЕЛГАВА (МИТАВА) ЧУГУН ҪУЛ УЗЕЛӖСЕНЕ ТАПАННИ

Июлӗн 29-мӗшӗ ҫӗрле пирӗн авиаци Варшава, Рига, Иелгава (Митава) чугун ҫул узелӗсенче тӑшманӑн капланса тулнӑ ҫар эшелонӗсем ҫине бомбӑсем пӑрахнӑ.

Варшава чугун ҫул узелӗнче бомбӑсем пӑрахнине пула Хӗвелтухӑҫ, Вильно тата Прага вокзалӗсенче пушарсем нумай тухнӑ. Тӑшманӑн вӑрҫӑ техники, боеприпас тата ытти хатӗрсем те турттарса пыракан чугун ҫул составӗсем ҫуннӑ. Пушарсенче взрывсем пулнӑ. Бомбӑсем тӳрех пырса тивнипе боеприпас турттарса пыракан икӗ эшелон сирпӗнсе кайнӑ.

Бомбӑсем пӑрахнине пула Ригӑпа Иелгава (Митава) чугун ҫул узелӗсенче тӑшманӑн темиҫе ҫар эшелонне ҫӗмӗрсе пӑрахнӑ е вут хыптарса янӑ. Пушарсенче вӑйлӑ взрывсем пулнӑ.

ИЮЛӖН 30-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

Июлӗн 30-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем ПСКОВ хулинчен хӗвеланӑҫнерехре тата кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехре тӑшманпа ҫапӑҫса малалла тапӑнса пынӑ, халӑх пурӑнакан 100 пункта ытла туртса илнӗ. Вӑл шутра ВИДОВИЧИ, ЛИСИЧКИ, СЕННО, ИРБОСКА (ИЗБОРСК), ПЕТРОВА, ЛЫЭПНА, БАЛВИ ятлӑ пысӑк ялсем тата ИРБОСКА, БЕЯ, ВИКСНА, БАЛВИ ятлӑ чугун ҫул станцийӗсем пур.

ДАУГАВПИЛС хулинчен хӗвеланӑҫнерехре пирӗн ҫарсем тӑшманпа ҫапӑҫса малалла тапӑнса пынӑ, халӑх пурӑнакан 80 пункта ытла туртса илнӗ. Вӑл шутра ВИЛЬЧАНЫ, СТЕЛМУЖЕ, ВОДМИНЦЕ, АВИЛЯЙ, ДУСЕТОС, КАВОЛЯЙ ятлӑ пысӑк ялсем тата ИЛУКСТЭ ятлӑ чугун ҫул станцийӗ пур.

ШАУЛЯЙ (ШАВЛИ) хулинчен ҫурҫӗр-хӗвелтухӑҫнерехре тата хӗвелтухӑҫнерехре пирӗн ҫарсем ӑнӑҫлӑ наступление вӑйлатса пынӑ, Литва ССР-ӗн уезд центрне БИРЖАЙ хулипе чугун ҫул станцине, Латви ССР-ӗн уезд центрне БАУСКА хулипе чугун ҫул станцине туртса илнӗ, ҫавӑн пекех тата, тӑшманпа ҫапӑҫса, халӑх пурӑнакан 300 пункта ытла йышӑннӑ. Вӑл шутра САЛОЧАЙ, ЖЕЙМЕЛИС, ВИТЕЙКИ, ЛИЕЛВИРЦАВА, ЗАЛЯМУЙЖА, ВИДЦЕ ятлӑ пысӑк ялсем тата ЖЕЙМЕЛИС, ПЛАТОНЕ, БРИЖУ, ГЛУДА ятлӑ чугун ҫул станцийӗсем пур.

АЛИТУС хулинчен ҫурҫӗртерехре тата кӑнтӑртарахра пирӗн ҫарсем НЕМАН шывӗн хӗвеланӑҫ хӗрринчи плацдармсем ҫинчен наступлени пуҫласа янӑ, тӑшман оборонине 110 километр сарлакӑш участокра татнӑ та 25 километр таран шалалла кӗрсе кайнӑ, тӑшманпа ҫапӑҫса, халӑх пурӑнакан 300 пункта ытла туртса илнӗ. Вӑл шутра ШЛЯНОВА, БОБИКЛЫ, ИСЛАУЖ, ПЛУТИШКИ, ЕСИОТРАКИ, ИГЛОВКА, ШАКАЛИШКИ, БАЛЬВЕРЖИШКИ, РЖЕЧЕВО, КРАКОПОЛЬ, СИМНО, СЕРЕЕ, ВЕЙСЕЕ, КАЖАНЫ, ГИБЫ, КОПЦОВО ятлӑ пысӑк ялсем тата ПАШНЯ, СИМНО ятлӑ чугун ҫул станцийӗсем пур.

БЕЛОСТОК хулинчен кӑнтӑртарахра пирӗн ҫарсем шоссе ҫулӗсен паха узелне БЕЛЬСК хулипе пысӑк чугун ҫул станцине туртса илнӗ, ҫавӑн пекех тата, тӑшманпа ҫапӑҫса, халӑх пурӑнакан ытти 60 пункта ытла йышӑннӑ. Вӑл шутра РЫБОЛЫ, СРЕДИНСКАЯ, ПЛЮТИЧИ, РАЙСК, АВГУСТОВО ятлӑ пысӑк ялсем тата СТРАБЛЯ ятлӑ чугун ҫул станцийӗ пур.

БРЕСТ хулинчен хӗвеланӑҫнерехре пирӗн ҫарсем ҫаплах наступлени туса пынӑ, тӑшманпа ҫапӑҫса, халӑх пурӑнакан 200 пункта ытла туртса илнӗ. Вӑл шутра ЯНУВ ПОДЛЯСКИ, БОРСУКИ, КОНСТАНТЫНУВ, МАРИАМПОЛЬ, ВОРГУЛЕ, МАНЕ, ЛУКОВИСКО, ВОЙНУВ, ПРУШИН ятлӑ пысӑк ялсем тата ЯНУВ ПОДЛЯСКИ, КОНСТАНТЫНУВ, МАРИАМПОЛЬ, МОРДЫ ятлӑ чугун ҫул станцийӗсем пур. Пирӗн ҫарсем тӑшманӑн БРЕСТ хулинчен хӗвеланӑҫнерехре ҫавӑрса илнӗ группировкине тӗппипех пӗтерсе тӑкнӑ. Парӑнман пирки, ҫавӑрса илнӗ фашистла нимӗҫ чаҫӗсене пирӗн ҫарсем пӗтӗмӗшпе тенӗ пекех вӗлерсе пӗтернӗ. Ҫапӑҫу хирӗнче тӑшман салтакӗсемпе офицерӗсен 15.000 вилли выртса юлнӑ. Вара аркатса тӑкнӑ чаҫсен юлашкийӗсем пӗтӗмпе 2.000 салтакпа офицер ытла пирӗн ҫарсене тыткӑна парӑннӑ. Малтанлӑха панӑ даннӑйсем тӑрӑх, пирӗн ҫарсем ҫакӑн пек трофейӑсем тытса илнӗ: танксем—32, хӑй тӗллӗн ҫӳрекен тупӑсем—19, тӗрлӗ калибрлӑ тупӑсем—112, минометсем—133, пулеметсем—306, автомашинӑсем — 4.000, тракторсемпе тягачсем—50, вӑрҫӑ хатӗрӗсемпе ҫар пурлӑхӗ тиенӗ лавсем—2.000, лашасем—8.000.

ЛЬВОВ хулинчен кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехре пирӗн ҫарсем тӑшманпа ҫапӑҫса малалла куҫса пынӑ, ДРАГОБЫЧ облаҫӗнчи район центрӗсене—КОМАРНО хулине, КРУКЕНИЧ ялне туртса илнӗ, ҫавӑн пекех тата, тӑшманпа ҫапӑҫса, халӑх пурӑнакан ытти 70 пункта ытла йышӑннӑ. Вӑл шутра МЫСЛЯТИЧИ, РОГИЗНО, МИСТКОВИЧИ, ПЫНЯНЯ, КАРНАЛОВИЧИ, КОЛБАЕВИЧИ, КОЛОДРУБЫ ятлӑ пысӑк ялсем тата КОМАРНО-БУЧА, РУДКИ, ХЛОПЧИЦЫ ятлӑ чугун ҫул станцийӗсем пур.

СТАНИСЛАВ хулинчен хӗвеланӑҫнерехре пирӗн ҫарсем Станислав облаҫӗнчи район центрне ДОЛИНА хулине туртса илнӗ, ҫавӑн пекех тата, тӑшманпа ҫапӑҫса, халӑх пурӑнакан ытти 30 пункта ытла йышӑннӑ. Вӑл шутра КРЕХОВИЦЕ, НАДЗЕЮВ, РАХИН, БРОЧКУВ, ВЫГОДА, МИЗУНЬ, СТАРЫ, ПШЕНИЧНИК ятлӑ пысӑк ялсем тата КРЕХОВИЦЕ, РАХИН, ДОЛИНА ятлӑ чугун ҫул станцийӗсем пур.

Фронтӑн ытти участокӗсенче паллӑ улшӑнусемех пулман.

Июлӗн 29-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем мӗнпур фронтсенче нимӗҫсен 101 танкне ҫӗмӗрсе тӑкнӑ. Сывлӑшри ҫапӑҫусенче тата зенитнӑй артиллери тӑшманӑн 20 самолетне персе ӳкернӗ.

☆ ☆ ☆

Даугавпилс хулинчен хӗвеланӑҫнерехре пӗр соединени чаҫӗсем, тӑшмана аякран кайса ҫавӑрса илмелли маневра ҫав тери хӑвӑрт тунӑ хыҫҫӑн, тӑшман пехотине 2 батальона ҫити аркатса тӑкнӑ. 3 танк, 2 бронетранспортер, 9 тупӑ, 36 пулемет тата 3 боеприпас склачӗ тытса илнӗ. Пирӗн ҫарсем тӑшманпа ҫапӑҫса малалла куҫса пырса, халӑх пурӑнакан 100 пункта ытла туртса илнӗ. Уйрӑм участоксенче нимӗҫсем контратака туса совет чаҫӗсен наступленине чарса лартма хӑтланнӑ, анчах вӗсен контратакисем пӗри те ӑнӑҫлӑ пулман.

* * *

Шауляй (Шавли) хулинчен ҫурҫӗр-хӗвелтухӑҫнерехре тата ҫурҫӗртерехре пирӗн ҫарсем ҫаплах ӑнӑҫлӑ наступлени туса пынӑ. Тӑшман, эсэсовецсемпе охраннӑй чаҫсене пӗр ҫӗре пухса, хытӑ хирӗҫ тӑнӑ. Хаяр ҫапӑҫусем пулса иртнӗ хыҫҫӑн, совет танкисчӗсемпе пехотинецӗсем нимӗҫсене ывӑтса янӑ, малалла куҫса пырса, Биржай хулипе Бауска хулине туртса илнӗ. Пирӗн чаҫсем Иелгава (Митава) хулинчен 12 километрта ларакан Платоне ятлӑ чугун ҫул станцине йышӑннӑ. 800 нимӗҫ салтакӗпе офицерне ытла вӗлерсе пӗтернӗ, 120 автомашина, 18 танк, пӗр бронепоезд пӗтерсе тӑкнӑ. 80 автомашина, 3 чугун ҫул эшелонӗ, апат-ҫимӗҫпе горючин 3 складне тытса илнӗ. 250 нимӗҫе тыткӑна илнӗ.

Алитус хулинчен ҫурҫӗртерехре тата кӑнтӑртарахра тӑшман темиҫе кун хушши пирӗн Неман шывӗн хӗвеланӑҫ хӗрринчи плацдармсене пӗтерсе лартма хӑтланнӑ. Совет чаҫӗсем тӑшмана халран кӑларнӑ хыҫҫӑн наступлени пуҫласа янӑ та, тӑкӑлӑн пыра-пыра ҫапса, нимӗҫсен оборонине татнӑ. Ҫитӗнӗве вӑйлатса пырса, пирӗн ҫарсем халӑх пурӑнакан 300 пункта ытла туртса илнӗ. Пӗр соединени чаҫӗсем 45 танк, 33 тупӑ тата тӑшманӑн 160 автомашинине пӗтерсе тӑкнӑ. Трофейӑсем тытса илнӗ, вӑл шутра 20 танк, 11 бронетранспортер, 85 пулемет тата 58 чугун ҫул вагонӗ пур. Пӗр чаҫри подразделенисем, Каунас хулинчен 13 километр кӑнтӑртарахра ларакан Ислауж ялӗнчи нимӗҫсен гарнизонне аркатса тӑкнӑ. Бобиклы ялӗ районӗнче пирӗн ҫарсем нимӗҫсен 11-мӗш сывлӑш корпусӗн халь ҫеҫ фронта ҫитнӗ саперӗсен парашютнӑй батальонне пӗтерсе тӑкнӑ. Пӗр кун хушшинчи ҫапӑҫусенче тӑшманӑн 3.000 салтакӗпе офицерне ытла вӗлернӗ, 700 гитлеровеца тыткӑна илнӗ.

* * *

Брест хулинчен хӗвеланӑҫнерехре пирӗн ҫарсем, тӑшманӑн ҫӗмӗрсе тӑкнӑ соединенийӗсене хӑваласа пырса, халӑх пурӑнакан чылай пунктсене тытса илнӗ. Нимӗҫсем васкасах ҫӗнӗ вӑйсем илсе пыраҫҫӗ те вӗсене ҫул ҫинченех ҫапӑҫӑва кӗртсе яраҫҫӗ. Пӗр участокра эсэсовецсен «Геринг» ятлӑ танковӑй дивизийӗн чаҫӗсем хаяр контратака пуҫласа янӑ. Совет артиллерисчӗсем тӑшмана питӗ вӑйлӑн пеме пуҫланӑ, эсэсовецсен ирӗксӗрех каялла чакма лекнӗ. Ҫапӑҫу хирӗнче тӑшманӑн персе ҫӗмӗрнӗ е ҫунтарса янӑ 29 танкӗ тӑрса юлнӑ тата нимӗҫ салтакӗсемпе офицерӗсен 500 виллине ҫити выртса юлнӑ.

* * *

Львов хулинчен кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехре пӗр соединени чаҫӗсем тӑшманпа ҫапӑҫса Стрвионж шывӗ тата Днестр шывӗ урлӑ каҫнӑ та Драгобыч хулинчен 20 километрта ларакан Карналовичи ялне туртса илнӗ. Тепӗр участокра пирӗн ҫарсем кулкаҫичченхи ҫапӑҫусенче тӑшманӑн 600 салтакӗпе офицерне ытла вӗлерсе пӗтернӗ, хӑй тӗллӗн ҫӳрекен 5 тупӑпа, 12 бронетранспортера тата ҫарсемпе вӑрҫӑ хатӗрӗсем турттарса пыракан 40 автомашинӑна персе ҫӗмӗрнӗ е ҫунтарса янӑ. Нимӗҫсенчен 53 тягач, 13 хир тупӑи тата 29 автомашина тытса илнӗ. 200 гитлеровеца ытла тыткӑна илнӗ.

* * *

Хӗрлӗ Ялавлӑ Балтика флочӗн авиацийӗ Нарва заливӗнче тӑшманӑн хуралта ҫӳрекен виҫӗ карапне шыва путарнӑ.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Указĕ

Чăваш АССР-ĕнчи уйрăмах палăрнă учительсене Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе награлăласси çинчен

Шкулти вĕрентӳпе воспитани ĕçĕнче тунă çитĕнӳсемшĕн Чăваш АССР-ĕнчи уйрăмах палăрнă учительсене Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе наградăлас:

1. Николай Михайлович **Автономова** — Муркаш районĕнчи Тивĕш вăтам шкулĕн учительне.
2. Александра Евгеньевна **Авровăна** — Улатăрти 7-мĕш номерлĕ вăтам шкулăн учительницине.
3. Зинаида Михайловна **Авровăна** — Улатăр районĕнчи Ямской Посадри çичĕ çул вĕренмелли шкулăн учительницине.
4. Екатерина Андриановна **Андриановăна** — Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Юртакасси пуçламĕш шкулĕн заведующине.
5. Ханя Юнусовна **Акчуринăна** — Чăваш АССР Çутĕç Халăх Комиссариачĕн шкулсен управленин инспекторне.
6. Агриппина Александровна **Александровăна** — Элĕк районĕнчи Писĕп вăтам шкулĕн директорне.
7. Ирина Александровна **Александровăна** — Çĕрпӳ районĕнчи Сталино ялĕнчи вăтам шкулăн учительницине.
8. Ираида Порфирьевна **Алексеевăна** — Чкаловски районри Тигешри пуçламĕш шкулăн заведующине.
9. Нина Алексеевна **Алексеевăна** — Ишлей районĕнчи Ишек вăтам шкулĕн директорне.
10. Анисия Алексеевна **Андреевăна** — Шăмăршă вăтам шкулĕн директорне.
11. Иван Андреевич **Андреева** — Красноармейски районри Шурккари çичĕ çул вĕренмелли шкулăн директорне.
12. Таисия Андреевна **Андреевăна** — Тăвай районĕнчи Ивановăри çичĕ çул вĕренмелли шкулăн учительницине.
13. Василий Антонович **Антонова** — Красноармейски районри Мартынкăри çичĕ çул вĕренмелли шкулăн учительне.
14. Дмитрий Федорович **Апухтина** — Етĕрнери педагогика училищин преподавательне.
15. Хиония Павловна **Апухтинăна** — Етĕрне вăтам шкулĕн учительницине.
16. Иван Тимофеевич **Артамонова** — Улатăр хулин çутĕç пайĕн заведующине.
17. Прасковья Андреевна **Барабинăна** — Пăрачкаври пуçламĕш шкулăн учительницине.
18. Любовь Николаевна **Белоруссовăна** — Октябрьски районри Кĕчкейри ача çурчĕн директорне.
19. Екатерина Александровна **Блохинăна** — Çĕмĕрлери 2-мĕш номерлĕ вăтам шкулăн вĕренӳ пайĕн заведующине.
20. Ангелина Аркадьевна **Богатыревăна** — Чăваш АССР Çутĕç Халăх Комиссариачĕн планпа финанс управленийĕн начальникне.
21. Любовь Николаевна **Богатыревăна** — Шупашкарти хĕрачасен 2-мĕш номерлĕ вăтам шкулĕн директорне.
22. Валентина Александровна **Богдановскаяна** — Шупашкарти Чапаев поселокĕнчи вăтам шкулăн учительницине.
23. София Яковлевна **Большаковăна** — Улатăр районĕнчи Атрать вăтам шкулĕн вĕренӳ пайĕн заведующине.
24. Иван Евдокимович **Бондарева** — Сĕнтĕрвăрринчи вăтам шкулăн директорне.
25. Михаил Андреевич **Васильева** — Канаш хулин çутĕç пайĕн заведующине.
26. Николай Александрович **Весновские** — Етĕрнери ача çурчĕн директорне.
27. Андрей Алексеевич **Власова** — Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Атнар вăтам шкулĕн директарĕ пулнăскерне, халĕ райçĕрĕç пайĕн заведующийĕ пулса ĕçлекенскерне.

(Малалли пулать.)

РЕСПУБЛИКА УЙХИРĔСЕНЧЕ

Малта пыракан колхозсем ыраш вырса пĕтерчĕç

Колхоз уйхирĕсенче кунĕн-çĕрĕн хĕрӳллĕ ĕç вĕресе тăрать. Анса пулнă тырпула вăхăтра пухса кĕрессишĕн колхозниксем ывăнма пĕлмесĕр ĕçлеççĕ. Малта пыракан «Осоавиахим», «Пахарь», «Вперед» тата Ворошилов ячĕпе тăракан колхозсем ыраш вырса пĕтерчĕç. Çак кунсенчех «Комбайн» тата Крупская ячĕпе тăракан колхозсем те ыраш вырса пĕтереççĕ. Паянхи кун тĕлне пурĕ 5616 гектар ыраш вырнă, вăл шутран 2303 гектарне жнейкăсемпе вырнă.

Кашни колхозрах СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕн «1944 çулта тырпул пухса кĕртесси тата ялхуçалăх продукчĕсене хатĕрлесси çинчен» йышăннă постановленине тĕплĕн сӳтсе-явнă. Халĕ колхозниксемпе колхозницăсене ĕçленĕ çĕрте уйрăмăн ăнлантараççĕ. СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕн постановленине сӳтсе-явнă хыççăн колхозниксен ĕç тухăçлăхĕ хăпарать. «Пахарь» колхозра М. Порфирьева кашни кунах нормăна 230 процент, В. Чернова 240 процент тултараççĕ. «Красные Темяши» колхозра машинăпа вырнă хыççăн М. Емельянова юлташ 0,33 гектар вырăнне 0,52 гектар çинче кĕлте çыхать.

Аслă Елчĕкри Ленин ячĕпе тăракан колхозра машинăпа вырнă хыççăн пучахсене пухма шкул ачисемпе пионерсенчен 3 отряд тунă, вĕсем кашни кунах хирте ĕçлеççĕ.

С. МАКАРОВ,
ВКП(б) Елчĕк райкомĕн секретарĕ.

Комбайнсене колхозсен уйхирне ăсатаççĕ

КОМСОМОЛЬСКОЕ, июлĕн 28-мĕшĕ. (**Телефонпа**). МТС-ри комбайнсене 16-ĕшне те юсаса пĕтернĕ хыççăн паян государство комиссийĕ лайăх пахалăхпа юсанă тесе йышăнчĕ.

Паян комбайнерсемпе трактористсен канашлăвĕ пулса иртрĕ, унта СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕн «1944 çулта тырпул пухса кĕртесси тата ялхуçалăх продукчĕсене хатĕрлесси çинчен» йышăннă постановленине пурнăçлас тĕлĕшпе мĕнле ĕçлемеллине сӳтс-яврĕç. Комбайнерсем хăйсем çине çĕнĕ обязательствăсем илчĕç. МТС дирекцийĕ малта пыракан комбайнера пама куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялав тунă.

Н. КОНДАКОВ.

Авăн çапма тытăннă

МУРКАШ, июлĕн 31-мĕшĕ. (**Телефонпа**). Районри колхозсенче тырă вырас ĕç кунран кунах сарăлса пырать. Июлĕн 30-мĕшĕ тĕлне 723 гектар вырнă. Тырă вырасси уйрăмах «Красное Сормово», «Красное знамя», «Свобода», «Ударник» колхозсенче ăнăçлăн пырать. Вĕсем тырпулсене пуçтарса кĕртес ĕçе партипе правительство кăтартса панă пек организациленĕ.

«Красное Сормово» тата «Красное знамя» колхозсенче 2-шер жнейкăпа выраççĕ. Алăпа выракансене уйрăм участоксем уйăрса панă. Кашни колхозник пĕр-пĕрнипе ăмăртса ĕçлет. Çавăнпа ĕнтĕ вăл колхозсенче нормăна ирттерсе тултаракансен йышĕ те ӳссе пырать. «Красное знамя» колхозри Т. Быкова, Н. Зайцева, А. Николаева юлташсем нормăна куллен 150—170 процент тултараççĕ.

Асăннă колхозсенче столовăйсем ĕçлеççĕ. Колхозниксене ĕçленĕ çĕре пырса апат çитереççĕ. Апат вăхăтĕнче хаçат-журналсем вуласа параççĕ, калаçусем ирттереççĕ.

«Красное знамя» колхоз ку таринччен 40 гектар вырнă, авăн çапма тытăннă.

Çак вăхăтрах Муркаш ялсоветне кĕрекен Буденный ячĕпе тăракан колхоз халĕ те тырă вырма тухман. Унта утă пуçтарса кĕртес ĕçе те вĕçлемен-ха.

Т. ИВАНОВ.

Тырă вырас ĕç хĕрсех пырать

ЙЕПРЕÇ. Районри 15 колхоз пиçсе çитнĕ ыраша суйласа выраççĕ. «Герой», «Красный Водник», «10 лет Октября» колхозсем массăллăн вырма тытăнчĕç. Кăçалхи çул колхозсенче тырпула кĕске вăхăтра, пĕр тăккаламасăр пуçтарса кĕме пур майсем те пур. Иртнĕ çулта колхозсенче тырă вырмалли машинăсем, лобогрейкăсем ăçта килчĕ унта арканса выртнă пулсан, кăçал вĕсене пурне те юсанă. Пур колхозсенче те кĕреплеллĕ çавасем хатĕрленĕ. «Большевик» колхоз 5 жнейка, 5 лобогрейка, 57 кĕреплеллĕ çава юсаса хатĕрлесе хунă, вăл тырпулсене пĕтĕмĕшпех 19 кун хушшинче пухса кĕме шутлать. Çак колхоз сентябрĕн 15-мĕшĕ тĕнче государствăна тырă парса татма пулчĕ.

П. КУРАКОВ.

Ăнса пулнă тырра куç шăрçине упранă пек сыхлатпăр

ЕЛЧĔК. Тимирязев ячĕпе тăракан колхозăн уйхирĕнче кăçал тулăх тырпул çитĕнчĕ. Колхозниксемпе колхозницăсем ăнса пулнă тырпула вăхăтра тата тăккаламасăр пухса кĕртессишĕн ывăнма пĕлмесĕр ĕçлеççĕ. Тырпулсене лайăх пухса кĕртсен, ĕçкунĕсем тăрăх валеçме чылай тырă юлать. Мария Указова, Николай Лебедев, Христина Пушкова тата ытти стахановецсем колхозра кунне-çĕрне пăхмасăр ĕçлеççĕ.

Анчах колхозра ĕçлемесĕр, тĕрлĕ кирек сĕр майсемпе пурăнма вĕреннисем те пурха. Акă Е. Мясникова, К. Хулатта, С. Лебедев тата ытти хăшпĕрисем çак вăхăта çитсе те пĕр ĕçкунĕ те туман. Колхозра ĕçлес вырăнне вĕсем вăрласа тăранма шутланă. Нумаях пулмасть Е. Мясниковăпа К. Хулатта колхоз уйне тухнă та ыраш пучахне 10 килограмм ытла касса вăрланă.

Колхоз уйхирĕнчи тырăсене пирĕн комсомолецсем хураллаççĕ. Вĕсем часах çак вăрăсене тытнă та колхоз правленине илсе пынă. Мясниковăпа Хулаттăна суда панă. Халăх сучĕ вĕсене икĕ çул тĕрмене хупмалла тунă.

Колхоз уйхирне хураллас ĕçе халĕ татах та вăйлăлатрăмăр, кăнтăрла та, çĕрле те хураллатпăр. Ăнса пулнă тырра куç шăрçине упранă пек сыхлатпăр.

А. ПУШКОВ.

Тырă вырма лайăх хатĕрленсе тухрĕç

КОМСОМОЛЬСКОЕ, июлĕн 28-мĕшĕ. (**Телефонпа**). Районри колхозсенчен нумайĕшĕ ыраш вырма тытăнчĕç. Тырпулсене пухса кĕртме Шмидт ячĕпе тăракан колхоз лайăх хатĕрленсе тухрĕ. Кунта тырă вырма тухиччен выльăхсен витисене юсаса пĕтернĕ. Выльăхсене хĕлле çитерме 170 тонна силос хывнă, 75 центнер вĕлтрен, 30 центнер армути пухса типĕтнĕ. Михĕсем, шăналăксем, ут таврашĕсемпе урапасем çителĕклĕ.

Июлĕн 27-мĕшĕнче колхозри 7 бригада та ыраш вырма тытăнчĕç. Кашни бригадărах пĕрер жнейка ĕçлет. Жнейкăпа нормăна тултарсах пыраççĕ. План тăрăх 221 гектар ыраша 6 кунта вырса пухмалла. Тырă вырнă çĕрте уйрăм сдельщинăпа ĕçлеççĕ, кулленхи ĕç нормине тултарман пĕр колхозник те çук.

Колхозра пĕрлешӳллĕ столовăй тата ачасен ясли ĕçлеме тытăнчĕ. Агитаторсемпе вулавçăсем — яланах колхозниксемпе пĕрле. «Боевой листоксем» кашни бригадăрах тухма пуçларĕç.

П. ТАЛЛЕРОВ.

Силос хыврĕç

Ишлей районĕнчи нумай колхозсем тырпулсене пухса кĕртме хатĕрленнипе пĕрлех, силос хывас тĕлĕшпе те хĕрсех ĕçлерĕç. Юлашки кунсенче «Герой» колхоз — 10 тонна, «Коминтерн» колхоз—25 тонна силос хыврĕç. Силос хывнă çĕрте вĕсем ытларах çумкурăксемпе усă курчĕç.

Г. СЕРЕБРЯКОВ.

Ӳкерчĕк çинче: Ишлей МТС-ĕн старши механикĕ **Н. К. Кириллов** юлташ. Лайăх ĕçленĕшĕн ăна «Отличник Социалистического сельского хозяйства» значокне тата Чăваш АССР Верховный Совечĕн Хисеплĕ грамотине парса наградăланă.

Н. ДАНИЛОВ фотоӳкерчĕкĕ.

И. А. Крылов вилнĕренпе 100 çул çитнĕ тĕле

СССР Совнаркомĕ вырăссен аслă поэчĕ, баснописеçĕ Иван Андреевич Крылов вилнĕренпе 100 çул çитнине асăнса ирттерес енĕпе ĕçлеме Пĕтĕм Союзри Комитет тунă. Комитета наукăн тата литературăпа искусствăн 35 деятелĕ кĕреççĕ: А. Н. Толстой (председатель), Н. Н. Бажан, П. П. Бажов, А. А. Байков, И. Барбарус (Варес), Д. Д. Благой, И. Г. Большаков, А. А. Еголин, Г. И. Заславский, И. В. Ильинский, М. В. Исаковский, В. И. Качалов, Лео Киачели, Якуб Колас, В. И. Лебедев-Кумач, И. И. Мещанинов, С. В. Михалков, Н. А. Михайлов, И. М. Москвин, С. П. Обнорский, Ю. Паецкий, М. Ф. Погодин, Д. А. Поликарпов, В. П. Потемкин, А. А. Прокопьев, А. А. Пузин, И. А. Пырьев, М. Ф. Рыльский, А. А. Сурков, Н. С. Тихонов, М. Б. Кравченко, Д. А. Шмаринов, Л. В. Щерба, И. Г. Эренбург, А. А. Яблочкина.

Çак комитета И. А. Крылов вилнĕренпе 100 çул çитнĕ куна ирттермелли тивĕçлĕ мероприятисене палăртма хушнă. И. А. Крыловăн сочиненийĕсен пĕтĕм пуххине пичетлесе кăлармалла. Çав кĕнекесен 1-мĕш томне 1944 çулхи ноябрĕн 21-мĕшĕччен пичетлесе кăлармалла. Кăçалхи октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне Крылов баснисене массăллă тиражпа кăлараççĕ. Мускавра И. А. Крылов памятникне лартма йышăннă. (ТАСС).

Рогачев партизанĕсен историйĕ

Вăрçă вăхăтĕнчи виçĕ çул хушшинче Белоруссин ССР-ĕнчи Рогачев районĕнчи партизансем тăшманăн çарсемпе грузсем тиенĕ эшелонĕсене 200 таран ӳпĕнтерсе янă, темиçе вунă кĕпере сирпĕнтерне, районри çыхăну ĕçне ишĕлтерне, нимĕçсен темиçе пин салтакĕпе офицерне вĕлерне.

Вăрмантан хăйсен районне таврăннă хыççăн партизансем хăйсен отрячĕсен историне çырма йышăннă. Вĕсем отрядсен ĕçĕсем çинчен документсем пухаççĕ. Ку таранччен нумай картинăсемпе фотографисем пухнă та ĕнтĕ. Партизансен пурнăçĕ çинчен калакан материалсем интереслă.

Ялхуçалăхĕнче ĕçлекен çамрăк специалистсен çĕнĕ отрячĕ

СССР Наркомземĕн аслă ялхуçалăх шкулĕсенче вĕренсе тухмалли экзаменсем вĕçленсе пыраççĕ. Кăçал 2.000 çамрăк специалиста ягăн вĕренсе тухать. Вĕсенчен пысăкрах пайне нимĕç оккупацийĕнчен ирĕке кăларнă районсене çĕрĕç органĕсемпе колхозсене ĕçлеме яраççĕ. Агрономсен, зоотехниксен, ветеринари врачĕсен тата инженерсен чылай пысăк пайне пирĕн çĕршывăн хĕвелтухăçĕнчи районĕсене яраççĕ.

Колхозсемпе районри çĕрĕç органĕсене çавăн пекех тата халь техникумсемпе вăгам ялхуçалăх шкулĕсенче испытани парса пĕтерекен 5.000 специалиста ягăн яраççĕ. (ТАСС).

Кĕрешекен Данин полномочнăй представителĕ Т. Дессинг господин Совет Союзне килни

Июлĕн 31-мĕшĕнче Кĕрешекен Данин Совет Союзĕнчи Полномочнăй Преставителĕ Томас Дессинг господин Мускава çитнĕ. Центральный аэродромра Т. Дессинг господина СССР Наркоминделĕн Протокол Отделĕн Заведующин ĕçĕсене туса пыраканĕ Г. И. Фомин юлташ кĕтсе илнĕ.

Çурçĕр Францири вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, июлĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ июлĕн 29-мĕшĕнче ирхине пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă:

Кутанс хулине тăшманран тасатнă. Союзниксен танковăй чаçĕсем Сьенн вăрринчен кăнтăртарахра тинĕс хĕррине тухнă. Кутанс хулинчен çурçĕртерехри районсене тăшманран хăвăрт тасатса пыраççĕ. Нотр-Дам-ле-Сенильирен кăнтăр-хĕвеланăçнелле наступлени туса пыракан çарсем каллех малалла куçнă.

Союзниксен авиацийĕ тăшман позицийĕсене, склачĕсене, чугун çул объекчĕсене тата ытти çар объекчĕсене те чылай тĕлте атакăланă.

* * *

ЛОНДОН, июлĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ июлĕн 29-мĕшĕнче каçхине пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă:

Союзниксен танковăй колоннисем, тăшман вăйлăрах хирĕç тăма пуçланине çĕнтерсе, фронтăн хĕвеланăç секторĕнче çаплах малалла куçса пыраççĕ. Пĕр колонна Кутанс хули çывăхĕнче, хĕвеланăçнелле куçса, тинĕс хĕррине тухнă та Пон-де-ля-Рок хулине туртса илнĕ. Тепĕр колонна Кутанс хулинчен кăнтăртарахра ларакан Иенвилль патне çитнĕ. Серизи-ла-Сель тата Монпишон узелĕсенче тăшман хирĕç тăнине пĕтерсе лартнă. Вильбодонпа Сен-Дени-Гаст хушшинче фронтăн малалла тухса тăракан кукăрне тăшманран тасатнă. Амби хулине туртса илнĕ. Тесси хулинчен кăнтăртарахра тăшман çарĕсем Вир шывĕн икĕ хĕррине те йышăнса тăраççĕ. Сен-Ло хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре союзниксен çарĕсем темиçе километр малалла куçнă.

Паян ирхине истребитель-бомбардировщиксем нимĕçсен Морле çывăхĕнчи çар сооруженийĕсене тапăннă.

ИСПАНИРЕ НИМĔÇСЕНЕ ЙЫШĂНМА ЛАГЕРЬ ХАТĔРЛЕНИ

ЛОНДОН, июлĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). АФИ агентстви çапла пĕлтерет: Испанин çар влаçĕсем питĕ пысăк лагерь хатĕрлеççĕ. Çав лагере вĕсем Францин кăнтăр-хĕвеланăç пайĕнче тăракан нимĕç çарĕсен чаçĕсене йышăнма хатĕрлеççĕ. АФИ агентстви малалла çапла калать: Германие тăтăклăнах çĕнтерсе тăксан, нимĕçсем вăйпа илнĕ Франци урлă Германие таврăнас çук, вĕсем хăйсене валли хӳтлĕх Испанире тупма тăрăшĕç».

Италири вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, июлĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен штабĕ çапла пĕлтерет: акăлчансен 8-мĕш армийĕн Флоренци хулинчен хĕвеланăçнерехре Арно шывĕ еннелле наступлени туса пыракан чаçĕсем чылаях малалла куçнă, вĕсем Эмполи хулине çитесси 6 километр кăна юлнă. Арно шывĕпе Тибр шывĕ хушшинчи çӳллĕ вырăнта акăлчансен 8-мĕш армийĕн чаçĕсем тăшманпа хытă çапăçнă, вĕсем, тĕллĕн-тĕллĕн малалла куçса, Читерна хулине туртса илнĕ. Фронтăн Адриатика участокĕнче акăлчансен 8-мĕш армийĕн чаçĕсем Мизаи шывĕ çинче çирĕп позицисем йышăннă, халĕ вĕсем Сенигаллиа хули тулашĕнче çапăçаççĕ. Малти отрядсем Мизаи шывĕ урлă каçнă. Американецсен 5-мĕш армийĕн фронтĕнче патрульсем кĕрешнĕ тата тăшман çине артиллерирен персе тăнă.

Союзниксен вăтаçĕр тинĕс авиацийĕ 2.000 вĕçеве ягăн тунă.

Иртнĕ çĕр бомбардировщиксем Плоештири вăрçă объекчĕсене тапăннă.

* * *

ЛОНДОН, июлĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен штабĕ çапла пĕлтерет: паян 8-мĕш арми чаçĕсем Флоренци хулинчен хĕвеланăçнерехре сарлака фронтпа Арно шывĕ çинче тухнă, халĕ вĕсем Эмполи хули патне çитесси мĕн пурĕ те 2 миля кăна тăрса юлнă. 8-мĕш армин ытти чаçĕсем Флоренци хулинчен 5 миля кăнтăр-хĕвеланăçнерехри çӳллĕ вырăн çинче тăшманпа вăйлă çапăçаççĕ.

Адриатика тинĕсĕ хĕрринче союзниксем Сенигалиа хулине туртса илнĕ тата хăйсен Миза шывĕ патĕнчи плацдармне аслăлатнă.

5-мĕш арми фронтĕнче патрульсем çапăçаççĕ тата тăшмана хирĕç артиллери персе тăрать.

Ĕнер йывăр бомбардировщиксем Плоештири (Румыни) нефть тасатакан заводсене тата Флоринăри (Çурçĕр Греци) сортировка станцине тапăннă. Çавăн пекех тăшманăн çурçĕр Италири тата Югославири вăрçă объекчĕсем çине бомбăсем пăрахнă.

Югославири çапăçусем

ТИТО МАРШАЛĂН ШТАБĔ ЯТАРЛАСА ПĔЛТЕРНИ

ЖЕНЕВА, июлĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Югославирен пĕлтернĕ тăрăх, Югослави халăхне ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен армин Верховнăй Командованийĕн штабĕ юлашки вăхăтра пулса иртнĕ пысăк операцисем çинчен ятарласа панă пĕлтерĕве пичетлесе кăларнă. Пĕлтерӳре каланă тăрăх, нимĕçсен пысăк группировкине пĕтĕмĕшпех аркатса тăкнă. Нимĕçсен çав группировкинче эсэсовецсен «Скенденбург» ятлă дивизин чаçĕсем, 181-мĕш гренадерски дивизин чаçĕсем, 4-мĕш Бранденбургски полк тăнă, унта мĕн пурĕ 5.000 çын пулнă. Вĕсене артиллери, танксем тата авиаци хăватлăн пулăшса пынă. Югослави армийĕн аллине тăшманăн çар пурлăхĕ нумай лекнĕ.

Союзниксен авиацийĕн ĕçĕсем

АНГЛИ АВИАЦИЙĔ ШТУТГАРТ, ГАМБУРГ, ФРАНКФУРТ ХУЛИСЕНЕ ТАПĂННИ. — АМЕРИКАНЕЦСЕН 1.000 БОМБАРДИРОВЩИКĔ ГЕРМАНИЕ ТАПĂННИ

ЛОНДОН, июлĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Англин информаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, июлĕн 29-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле акăлчансен бомбардировщикĕсен пигех те пысăк соединенийĕсем Штутгарт, Гамбург хулисене тата Германири ытти объектсене те тапăннă. Бомбардировщиксен тепĕр соединенийĕ çурçĕр Францири объектсене тапăннă.

ЛОНДОН, июлĕн 30-мĕшĕ. ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, июлĕн 30-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англи бомбардировщикĕсем Франкфурт хулине тапăннă.

ЛОНДОН, июлĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, июлĕн 29-мĕшĕнче американецсен 1.000 йывăр бомбардировщикĕ ытла Мерзебург хулинчи синтетически нефть заводне тата Германири ытти объектсене те тапăннă.

САМОЛЕТ-СНАРЯДСЕМ АНГЛИ ÇИНЧЕ

ЛОНДОН, июлĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, июлĕн 28-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле çурçĕр çитиччен самолет-снарядсем Англин кăнтăр районĕсем çийĕнче, вăл шутра Лондон районĕ тĕлĕнче те, курăннă. Сиенсем тунă. Вырăнти халăх хушшинче вилнисемпе аманнисем пур.

Германири лару-тăру пирки

НЬЮ-ЙОРК, июлĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Нью-Йоркри радио çапла пĕлтернĕ: Германирен илнĕ юлашки хыпарсем тăрăх, Шпандаура гестапо ятарласа концентрациллĕ лагерь тунă, çав лагерьте Германи çарĕн офицерĕсем, лейтенантран пуçласа генерала çитиччен, СС сучĕ «шанчăксăр» тесе айăпланăскерсем, лараççĕ. Швейцарирен пĕлтернĕ тăрăх, Германи çарĕн темиçе вунă пин салтакĕпе офицерĕ мирлĕ халăх тумтирне тăхăнса суя документсемпе пытанса пурăнаççĕ.

СТАМБУЛ, июлĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Кунта илнĕ хыпарсем тăрăх, Гитлера вĕлерме тапăннă хыççăн Софи хулипе Берлин хули хушшинче татнă телеграф çыхăнăвне халĕ те юсаман-ха.

СТАМБУЛ, июлĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Кунти учреждениесенче пĕлнĕ хыпарсем тăрăх, Гитлера хирĕçле пăлхава хутшăннăшăн Германин хуçалăх министрĕ пулнă Яльмар Шахта тата Гитлерăн ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ, унтан «Чехипе Моравия протекторĕ» пулнă Нейрада персе пăрахнă.

ЛОНДОН, июлĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Британири радио саракан корпораци июлĕн 29-мĕшĕнче каçхине çапла пĕлтернĕ: халь илнĕ хыпарсем тăрăх, Гитлера хирĕçле пăлхав пуçĕнче Цейцлер генерал, армин генеральнăй штабĕн начальникĕ пулнăскер, тата Фромм тăнă. Гитлера вĕлерме тапăннă хыççăн армин генеральнăй штабĕн начальникĕ пулма Гудериан генерала лартнă. Çав пăлхава Берлинри полици начальникĕ граф Вольф фон Гельдорф та хутшăннă, теççĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Польша халăхне ирĕке кăларас тĕлĕшпе ĕçлекен Комитета тунă хыççăн

(ТАСС-ăн Европăри ĕçсене пăхса тăраканĕ çырнă статья)

Польша халăхĕ хăйĕн пĕрлĕхне çирĕплетес ĕçре тунă çитĕнӳсем — Гитлера хирĕçле пĕрлĕхлĕ çар туни, Гитлера хирĕç вăрттăн пыракан кĕрешӳре çĕршыври мĕнпур политикăллă вăйсене пĕтĕçтерсе чăн-чăн халăх влаçĕн органĕсене — Польшăн Халăх Советне, унтан вара Польша нацине ирĕке кăларас тĕлĕшпе ĕçлекен Комитета туни,—çаксем вĕсем пурте Лондонра ларакан эмиграцири «правительство» хутшăнмасăр тата пачах та ăна хирĕçле тунă çитĕнӳсем пулса тăраççĕ. Эмиграцири «правительство» Польша халăхĕнчен татăлса кайнă, вăл Польшăра пулса иртекен событисенчен аякра тăрса юлнă.

Поляксен Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенче пурăнакан паллă прогрессивнăй деятелĕ Оскар Ланге профессор, Польша пурнăçĕн чи çивĕч тапхăрĕнче Польшăн эмиграцири «правительстви» мĕнле вырăн йышăнса тăнине палăртса, Чикагори пресс-конференцире çапла каланă:

«Польша историйĕн татăклă сехетĕнче Польшăн эмиграцири правительстви пĕтĕмпех панкрута тухрĕ. Çав правительство Хĕрлĕ Çар çапăçса халран каяссине тата союзниксем пĕр-пĕринчен уйăрăлса каяссине кĕтсе тăнă. Анчах вăл кĕтнисем пĕри те тӳрре тухаймарĕç. Польшăна мĕнле майпа ирĕке кăларассине курма тата хаклама пĕлменнине пула, Польшăн эмиграцири правительстви Польша нацин кунçулне малалла ертсе пыма право çухатрĕ. Нациллĕ пĕрлĕх интересĕсене тивĕçтерес тесе, Польша патриочĕсен Союзĕ эмиграцири правительствăпа калаçса татăлма темиçе эрне каярах кăна хатĕр тăратчĕ. Союзниксен пĕрлĕхĕшĕн тăрăшакан Совет правительстви пирки те çавнах калама пулать. Малашнехине курма пĕлмен эмиграцири правительство ăнăçлă самантра ахалех ирттерсе ячĕ.

Польша нацине ирĕке кăларас тĕлĕшпе ĕçлекен Комитета тумалла пулнă, ку ĕçе Совет правительстви Польшăра çар администрацийĕ туса хума шутламасть, мĕншĕн тесен çакă вăл поляксене вырăссен влаçне пăхăнтарни пулнă пулĕччĕ. Çавăнпа та ĕнтĕ, Хĕрлĕ Çар Польша территорийĕ çине пырса кĕрсенех, Польшăн хăйĕн граждăнла администрацине туса хумалла пулнă. Польша нацине ирĕке кăларас тĕлĕшпе ĕçлекен Комитет Польша правительстви чăмăрĕ пулса тăрать. Унта Польша демократийĕн мĕнпур активлă ушкăнĕсен представителĕсем тăраççĕ...

Эпĕ Польшăран тухнă американецсене— Польша нацине ирĕке кăларас тĕлĕшпе ĕçлекен Комитета тата малашне çав комитетран пулса тăракан правительствăна шухăш-кăмăлпа материальнăй пулăшу пама чĕнетĕп».

Поляксен Лондонри прогрессивнăй союзĕ те хăй поляксене чĕнсе каланинче çав обстоятельствăнах палăртать. Союз чĕнсе каланинче çапла çырнă:

«Ирĕке кăларнă хуласемпе ялсенче влаçа тытса пырасси поляк халăхĕ аллине куçрĕ. Администрациллĕ управленин ĕçĕсене Польша нацине ирĕке кăларас тĕлĕшпе ĕçлекен Комитет туса пырать. Çав Комитета поляксен мĕнпур демократиллĕ партийĕсем пĕр-пĕринпе килĕштерсе тунă. Польша нацине ирĕке кăларас тĕлĕшпе ĕçлекен Комитетăн влаçне пĕтĕм çĕршыв йышăнчĕ. Поляк халăхĕн ячĕпе тухса каласси паянтан ĕнтĕ эмиграцири влаçран çĕршыври влаçа куçрĕ. Эмиграцире пурăнакан поляксем Польша ĕçĕсене поляк халăхĕн кăна татса пама право пурри çинчен калакан ыйту пирки нихçан та иккĕленмен. Халĕ ĕнтĕ çĕршыв сăмах ирĕклĕхне тупрĕ, эпир çак ирĕклĕхе пăхăнатпăр».

Поляксемпе славянсен Англири комитечĕ Польша нацине ирĕке кăларас тĕлĕшпе ĕçлекен Комитетăн председателĕ Осубка-Моравский патне послани янă. Поляксемпе славянсен комитечĕ, Польшăн эмиграцири «правительстви» çине мĕнле пăхнине палăртса, посланире çапла каланă:

«Эпир Польшăн Халăх Советне тата вăл тунă Польша нацине ирĕке кăларас тĕлĕшпе ĕçлекен Комитета Польша республикин пĕртен-пĕр законлă влаçĕ вырăнне хурса йышăнатпăр», тенĕ.

Çакна май, ют çĕршывсенчи пичет Миколайчикăн эмиграцири «правительстви» малашне мĕнле утăмсем тăвасси пирки тата Миколайчик Мускава кайма шут тытни пирки уйрăмах интересленнине ăнланмалла та ĕнтĕ.

Англипе Америкăри паллă хаçатсем чылайĕшĕсем Миколайчикăн Мускава каймалли планĕ майлă тухса калаççĕ. Çакăнпа пĕрлех вĕсем Польшăн Лондонри эмиграцири «правительстви» Совет Союзĕпе тӳрремĕнех тата уççăнах туслă çыхăну тытма пуçлас ĕçе питĕ кая хăварса пынине, çав çыхăнăва тăвассинчен пăрăнса пынине тата хăйĕн çĕршывĕнчи халăхран пачах та татăлса кайнине палăртаççĕ. Польшăн Лондонри ушкăнĕсене малашне Англипе Америка тата Совет Союзĕ хушшинчи çыхăнусене начарлатмалли утăмсем тума союзниксем ирĕк памĕç тесе асăрхаттараççĕ хăшпĕр хаçатсем.

Çапла, сăмахран, Неглей Фарсон, Польшăн эмиграцири «правительстви» пирки каласа, «Дейли мейл» хаçатра çапла çырать:

«Çав правительство хăй çĕршыв тулашĕнчи поляксен çарне контроллесе тăма пултарнине нихçан та кăтартса параймарĕ, çакна ăна нумаях мар каярах пулса иртнĕ хăшпĕр событисем уççăнах палăртрĕç... Англипе Америка тата Россия хушшинчи лайăх çыхăнусене сиен кӳмелле ан пултăр тесе, Британи правительстви те, Америка правительстви те поляксене мĕнле те пулин политикăллă пăтранчăк ыйтура пулăшу памĕç».

«Таймс» хаçатăн дипломатиллĕ ĕçсене пăхса тăраканĕ: Миколайчик хăй Мускава кайма питĕ кая юлса шут тытрĕ, тесе палăртать.

Ют çĕршывсенчи пичетĕн чылай органĕсенче çак шухăша палăртаççĕ: Миколайчик Мускава кайни вăл Совет правительствипе тата, пуринчен малтан, Польша нацине ирĕке кăларас тĕлĕшпе ĕçлекен Комитетпа калаçса татăлас пулсан кăна вырăнлă пулĕ, теççĕ.

Польшăн Лондонри хăшпĕр прогрессивнăй организацийĕсем Миколайчик патне телеграмма янă. Çав телеграммăра Польшăн Халăх Совечĕпе тата Польша нацине ирĕке кăларас тĕлĕшпе ĕçлекен Комитетпа килĕшӳ тунă никĕс çинче мĕнпур демократиллĕ вăйсен пĕрлĕхне туса хума кирлине çине тăрсах палăртнă.

Лондонри «Дейли мейл» хаçат çӳлерехре асăннă статьярах Польша реакционерĕсен поляк халăхĕпе нихăш енчен те çыхăнса тăман «принципиальнăй» позицийĕн «прозăлла» ăшчиккине уçса кăтартаççĕ. Çакă вара вăл поляксен эмиграцири «правительствин» линине кăтартса парать.

«Çакна шута илес пулать, — тесе çырать хаçат, — эмиграцири поляксен Лондонри хальхи правительстви майлă тăракан шултăра çĕрулпучĕсен хăшпĕр чи пысăкрах именийĕсемпе çĕрĕсем хĕвелтухăçĕнчи тавлашуллă территори çинче вырнаçса тăраççĕ».

Америкăра тухса тăракан «Нью-Йорк геральд трибюн» хаçат та хăй пичетлесе кăларнă Левицкий статьинче: эмиграцире пурăнакан поляксен реакциллĕ ушкăнĕсем тавлашуллă «хĕвелтухăçĕнчи территори çинче поляксем-колонизаторсем тата пусмăрçăсем пулса пурăннă», тесе çырать.

Çапла ĕнтĕ Польша чиккисем тĕлĕшпе хăйсен требованийĕсем çинчен кăшкăрса та çуйăхса калаçакан эмиграцири поляксен реакциллĕ представителĕсем хăйсен çĕрĕсемпе именийĕсем пирки анчах çунаççĕ.

Польша халăхĕ хăйĕн çарне тата хăйĕн власть органĕсене туса хурса, çав ыйтусене татнă чухне пĕтĕмĕшпех пĕрлĕхлĕ пулса тăрса, Польшăн хальхи тата малашнехи кунçулĕ пирки хăйĕн сăмахне каларĕ. Хăй пурнăçĕн чи ответлă тапхăрне пурăнса ирттерекен тата Польшăпа Совет Союзĕн пĕр тăшманне — нимĕç захватчикĕсене хирĕç ирĕклĕхшĕн кĕрешсе пыракан Польша халăхне вăл йышăннă çул çинчен нимĕнле вăй та пăрса яма пултараймасть. Совет çарĕсем Польша территорийĕ çине кĕнĕ хыççăн Совет Главнокомандующийĕпе Польша администрацийĕ хушшинчи çыхăнусем мĕнле пуласси пирки Польша нацине ирĕке кăларас тĕлĕшпе ĕçлекен Комитетпа килĕшӳ туса, Совет Союзĕ хăй Польша халăхĕн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхне туллин хисепленине татах та тепĕр хут кăтартса пачĕ.

А. ШАТИЛОВ.

Вăрнарти зооветтехникум 1-мĕш курса вĕренме илесси çинчен пĕлтерет.

Техникум зоотехниксемпе веттехниксем вĕрентсе хатĕрлет.

Техникума 14 çултан пуçласа 25 çула çитнĕ çынсене, туллимар вăтам шкултан вĕренсе тухнисем чухлĕ пĕлекеннисене илеççĕ.

Заявленисене августăн 20-мĕшĕччен йышăнаççĕ.

Заявленипе пĕрле çак документсене ямалла: а) хăçан, ăçта çуралнине кăтартакан свидетельство (свидетельствине хăйне, копине мар); б) ăçта, миçе çул вĕреннине кăтартакан свидетельство (свидетельствине хăйне); в) сывлăх çинчен калакан справка; г) çар службине тĕлĕшпе мĕнле шутланса тăнине кăтартакан справка (ăна военнообязаннăйсен ямалла); д) виçĕ фотокарточка.

Вĕренме кĕрес текенсен çак предметсемпе испытани тытмалла: вырăс чĕлхипе тата литературипе, математикăпа, конституципе.

Вăтам шкулăн 7-мĕш класĕнчен отлично вĕренсе тухнисене испытанисĕрех илеççĕ. Вăтам шкулăн 9-мĕшпе 10-мĕш класĕсенчен вĕренсе тухнисене те испытанисĕрех илеççĕ.

Вĕренме кĕмелли испытанисем августăн 21-мĕшĕпе 25-мĕшĕ хушшинче пулаççĕ.

Техникумăн столовăй, общежити, библиотека, мунча, прачечнăй пур.

Адрес: п/о. Вурнары, Зооветтехникум.

РСФСР Совнаркомĕ çумĕнчи Промкооперации управленийĕн Чăваш республикинчи уполномоченнăйне ялан ĕçлеме çакăн пек работниксем кирлĕ: производство отделĕн начальникĕ, металл ĕçне пĕлекен инженер, сăран атă-пушмак, çăматă тата хаклă йышши тир промышленноçĕ тĕлĕшпе ĕçлекен инженер, çĕвĕ ĕçĕ тата пир-авăр промышленноçĕ тĕлĕшпе ĕçлекен инженер, строительство материалĕсемпе селикат-керамика промышленноçĕ тĕлĕшпе ĕçлекен инженер, капитальнăй строительство, оборудовани тата хăрушсăрлăх техники тĕлĕшпе ĕçлекен инженер, инженер-экономист, старши статистик, статистик, бухгалтер-ревизор, юрисконсульт, икĕ делопроизводитель, машинистка.

Адрес: гор. Чебоксары, Красная площадь, 5.

ШУПАШКАРТИ КИНОТЕАТР

паян, августăн 1-мĕшĕнче, юлашки кун американецсен илемлĕ, темиçе сăрпа ӳкернĕ çĕнĕ фильмне

«ДЖУНГЛИ»

кăтартать.

Сеанссем çак вăхăтра пуçланаççĕ: 12, 14, 16, 18, 20, 22 сехетре.

Билетсене кассăра ирхине 10 сехетрех сутма пуçлаççĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместительпе секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин —0—23.

НТ 00290 Типографи №1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. б. 59Х42 п. д. Тираж 14.400 экз.